Саккун умĕнче пурте пĕр тан

Саккун сакки сарлака

Инкек пулсан, хӳтлĕх кĕтнĕ самантра, эпир чи малтан никамран та мар – милиционертан пулăшу ыйтатпăр. Мĕншĕн тесен пакунлă çынна шанатпăр. Çийĕнчех "02" службăпа çыхăнатпăр. Вĕсем вара халăх шанăçне тӳрре кăларма, преступленисене çийĕнчех уçса пама тăрăшаççĕ.

Вунпĕр уйăхри ĕç пĕтĕмлетĕвĕсемпе тата пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарма ыйтăм районти шалти ĕçсен пайĕн обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн ертӳçин ĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан В.М. МАКСИМОВРАН.

– Преступниксене тăрă шыв çине кăларас ыйту паян çивĕч тăрать. Çавăнпа та эпир хамăртан мĕн килнине пурнăçлама тăрăшатпăр. Преступлени тăвассине асăрхаттарас тата вĕсене уçса парас енĕпе тĕллевлĕ ĕçсем туса ирттеретпĕр. Апла пулин те вĕсен хисепĕ чакмасть-ха. Регистрацилене преступленисен пĕтĕмĕшле хисепĕ иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 39,5 процент ӳсрĕ, 526-ран 734-на çитрĕ. Преступленисен 77,2 процентне уçса панă. Республикăри ку кăтарту 51,6 процентпа танлашать.

Час-часах преступленисене ниçта та ĕçлемен (394), ӳсĕр çынсем (95) тата унччен судпа айăпланнă çынсем (75) тăваççĕ. Ют çын пурлăхне вăрланă тĕслĕхсем нумай тĕл пулаççĕ (318-тан 355-е). Кăçал уйăм кил-çуртран (40), хуçалăхран (23), автомашинăсем çинчен вăрланă (19) тĕслĕхсем пулчĕç.

Ял хуçалăх пурлăхне хапсăнасси те йăлана кĕрсе пырать пулмалла. Ун йышшисене 37 тупса палăртрăмăр. Акă, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри хуралçăсем машинăпа трактор паркĕнчен солярка вăрлас ĕçе хутшăнни паллă пулчĕ. Хуралçăсем çапла киревсĕр хăтланни ытти ертӳçĕсене те шутлаттармалла пек туйăнать.

Коллективлă садри дача участокĕнчен вăрланă 26 тĕслĕхе регистрацилеме тиврĕ. Çакă тăтăшах "Лантăш", "Энергетик", "Автомобилист" садсенче тĕл пулчĕ.

Террорла актсене асăрхаттарасси те çивĕч ыйтусенчен пĕри. Çакă çынсен пурнăçĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Телее, кун евĕр преступленисене регистрацилеме тивмерĕ.

Пĕр-пĕрне вĕлерес тĕслĕхсене 3 регистрацилене тата уçса панă, вĕсем иртнĕ çулхинчен 4 сахалтарах пулни палăрчĕ. Кун пек тискер ĕç Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче тĕл пулчĕ. Ниçта та ĕçлемен ывăлĕ амăшне вĕлернĕ. Çавăн пекех Ильинка, Йӳçкасси ял тăрăхĕсенче те çын пурнăçне вăхăтсăр татнă преступленисене тупса палăртрăмăр.

Тăтăшах çемьесенче харкашусем тухаççĕ. Ытларах чухне вара ӳсĕр упăшкасем арăмĕсене хĕнеççĕ. Кун пек тĕслĕхсене 27 регистрацилерĕмĕр. Харкашу, пĕлетĕр ĕнтĕ, ырри патне илсе пымасть. Акă, Уйкас Янасал тăрăхĕнче те хирĕçӳ инкекпе вĕçленчĕ. Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче çак кунсенче арçын пĕрле пурăннă хĕрарăма ирхи 3 сехетре çĕçĕпе чикни палăлă пулчĕ.

Дежурствăсем тĕрлĕрен иртеççĕ. Хăш чухне лăпкă, тепĕр чухне вара раци самантлăха та чарăнмасть. Йĕрке хуралçин пурин патне те çитмелле.

– Преступленисен хисепне чакарас тĕллевпе профилактика ĕçĕсем туса ирттеретĕр-и?

– Çапла, профилактика ĕçĕсене тăтăшах пурнăçлатпăр. Кашни кĕçнерни кун ял тăрăхĕсене тухса çӳретпĕр,ял тăрăхĕсен ĕçченĕсемпе, вĕрентӳ пайĕпе, И.С. Кабуркинапа тĕрĕслетпĕр. Шăмат кунсерен Культура çурчĕсене, клубсене çитсе каçхи рейдсем ирттеретпĕр. Çамрăксем эрех-сăрапа ан ашкăнччăр, хăйсене йĕркеллĕ тытма тăрăшчăр тетпĕр.

Тĕрлĕрен операцисем ирттеретпĕр. Иртнĕ эрнере "Алкогольсуррогат" операци вăхăтĕнче административлă 6 протокол çырма тиврĕ. Кашмаш, Шаптак, Москакасси, Муркаш ялĕсенче эрех сутнă тĕслĕхсене тупса палăртрăмăр. Çак кунсенче Рыккакассинчи пĕр çамрăк çур литр сăмакуна хăй хуçалăхĕнчи 7 килограмм сысна ашĕпе улăштарнă тĕслĕх палăрчĕ.

Декабрĕн 8-18-мĕшĕсенче "Ночь" операци вăхăтĕнче тĕрĕслевпе тухрăмăр. Иккĕлентерекен çынсене тытрăмăр, каласу ирттертĕмĕр.

Хальхи вăхăтра "Пиротехника" операци пырать. Çак операци вăхăтĕнче Муркаш пасарĕнче лицензисĕр пиротехника изделийĕсене сутнă 2 тĕслĕх тупса палăртăмăр. Ку тĕлĕшпе административлă протокол çырма тиврĕ. Культура çурчĕсен, клубсен ертӳçисене асăрхануллă пулма ыйтас килет. Çĕнĕ çул уявне асăннă тĕслĕхсемпе кĕтсе илес марччĕ.

– Хăш ял тăрăхĕсенче преступленисем ытларах пулса иртеççĕ?

– Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне манăн чи малтанах асăнас килет. Иртнĕ çул 59 преступлени регистрацилене пулсан, халĕ 71-не çитрĕ. Çавăн пекех Москакасси тата Муркаш ял тăрăхĕсенче тăтăшах йĕркене пăснисем тĕл пулаççĕ.

Ярапайкасси ял тăрăхĕнче 36-ран 24-на çити чакма пултарчĕ. Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче кăтарту пысăках мар (6).

– Юлашкинчен мĕн калама пултаратăр?

– Хамăрăн тĕллеве пирĕн малалла татах тимлĕрех пурнăçламалла. Районти криминаллă лару-тăрава лайăхлатса пыма пирĕн пурин те пĕрле тăрăшмалла. Çавăн чухне кăна преступленисемпе кĕрешес ĕçре ырă улшăнусем пулĕç.

Манăн районти шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракан К.И. Петрова, А.А. Кабуркина, О.Н. Потрякова, М.М. Мясникова, С.А. Иванова, Г.П. Миронова ырăпа асăнас килет. Вĕсем çăмăл мар ĕçре хăйсен тивĕçĕсене туллин пурнăçласа пыраççĕ.

Çавăн пекех пурне те çитес уявсемпе ăшшăн саламлатăп. Çемĕрсенче, кил-çуртра яланах ăнланулăх, килĕшӳ хуçалантăр.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
калаçнă.

Вулакан пултарулăхĕ

Пурнăç

Утап утас килнĕрен мар,
Утап чунпа тупăшса.
Юрлап юрлас килнĕрен мар,
Юрлап чуна пусарса.
Ватлăх кунĕ çăмăл мар,
Пурăнмашкăн çăмăл мар.
Хуйхи килет вĕç-хĕррисĕр,
Шухăшлатăн, ĕмĕтленетĕн,

Савăнăçĕ нумай мар.
Пурнăç каять каялла.
Чипер çулпа пынă çĕрте
Урапи ларать лакăма.
Тапаçланан пĕтĕм вăйран,
Аран тухан лакăмран.
"Ыран каллех мĕн кĕтет-ши?" –
Тесе шикленен татах.

Çапла иртет этем ĕмĕрĕ
Тапаçланса, тăрмашса.
Вĕçне-хĕрне çитсе тăрсан,
Пĕр нимĕн те кирлĕ мар.
Халĕ ĕнтĕ малалла
Мĕн кĕтсе пурăнмалла?
Çӳлти Турă хăй патне
Йлсе каясса кĕтмелле.

С. РОДИОНОВА.

Платкасси ялĕ.

Тав тăватпăр

Юратнă ывăла, шăллăма, Турай ял тăрăхĕнчи Тушкасси ялĕнче пурăннă Евгений Владимирович Чернова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн тата çак пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн колхозри тус-юлташĕсене, кӳршĕсене, çывăх тăванĕсене, пĕлĕшсене чĕререн тав тăватпăр.

Ашшĕпе амăшĕ, пиччĕшĕпе аппăшĕн çемйисем.

Спорт

Сĕтел çи теннисĕпе вăй виçрĕç

Декабрĕн 15-16-мĕшĕсенче Çатракасси шкулĕн спорт залĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем хушшинче сĕтел çи теннисĕпе мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ.

Декабрĕн 15-мĕшĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паркан тĕп шкулсем ăмăртнă. 10 команда хушшинче Панкли шкулĕн команди 1-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ, иккĕмĕшпе виççĕмĕшсем Кашмаш тата Сосновка шкулĕсен командисем пулнă. Уйрăм спортсменсенчен хĕрсем хушшинче Наталия Ефремова (Кашмаш, 1-мĕш вырăн), Елена Евдокимова (Панкли, 2-мĕш вырăн, Наталья Васильева (Панкли, 3-мĕш вырăн), яшсем хушшинче Олег Арапкин (Кашмаш, 1-мĕш вырăн), Максим Маслов (Кашмаш, 2-мĕш вырăн), Кирилл Павлов (Сосновка, 3-мĕш вырăн) палăрнă.

Декабрĕн 16-мĕшĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсен командисем вăй виçнĕ. 13 команда хушшинче Çатракасси шкулĕн команди çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. 2-мĕш вырăнта Калайкасси тата 3-мĕш вырăнта Муркаш шкулĕсен командисем. Уйрăм спортсменсенчен хĕрсем хушшинче Валентина Калинина (Калайкасси, 1-мĕш вырăн), Ольга Шишокина (Мăн Сĕнтĕр, 2-мĕш вырăн), Олеся Охотникова (Муркаш, 3-мĕш вырăн), яшсем хушшинче Анатолий Шапошников (Çатракасси, 1-мĕш вырăн), Алексей Ермолаев (Йӳçкасси, 2-мĕш вырăн), Валера Ваношкин (Калайкасси шкулĕ, 3-мĕш вырăн) малти вырăнсене йышăннă.

Çĕнтерӳçĕсем Хисеп грамотисемпе хаклă парнесене тивĕçнĕ. Призлă вырăн йышăннă командăсене дипломсем, парнесем тата куçса çӳрекен кубоксем панă.

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ çак ăмăртăва йĕркелесе ирттерме пулăшнăшăн Çатракасси шкулĕн директорне В.А. Прокопьева, физкультура учительне Р.В. Григорьева тав сăмахĕ калать.

Волейболистсем ăмăртĕç

Декабрĕн 23-мĕшĕнче Тивĕш шкулĕнче волейбол енĕпе ăмăртусем иртеççĕ. Унта ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен пĕрлештернĕ командисем хутшăнаççĕ. Командăра 9 участник тата 1 представитель пулмалла. Мала тухнă команда куçса çӳрекен кубока, диплома тата укçан парнене тивĕçет. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăн йышăннă командăсене дипломсемпе укçан парнесем параççĕ.

Хамăр инф.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаю стельную корову , возраст 3 отела , следующий отел в феврале 2007 , продуктивность 6 500 кг в год .
Тел . 8-919-660-00-81 Яндимиркин О.П. 1-2.

Халăхран лайăх хакпа ĕне, вăкăр, тына ашпа тата чĕрĕ виçепе пустаратпăр.
Тел.: 60-7-10, 8-927-848-17-06. 1-4.

Универмаг поздравляет всех жителей села Моргауши и Моргаушского района с наступающим Новым 2007 годом и объявляет о новогодней распродаже товаров со скидкой до 30 процентов. Всех приглашаем к нам за покупками, цены у нас низкие!

ИП «Иванов» предлагает населению и предприятиям-организациям оконные и дверные блоки, балконные рамы по индивидуальным заказам по договорной цене. Изготовляем деревянные евроокна с двухкамерным стеклопакетом. Цвет по желанию заказчика. Производим резку стекла по вашим размерам. Предоставляются новогодние и рождественские скидки 10 процентов до 31 января 2007 года.
Тел.: 8-905-346-81-95, 8-906-130-92-99. 3-10.

Татнă, çурнă, типĕтнĕ вутă сутатăп - 10 куб. м. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх.
Ыйтса пĕлмелле: Малиновка ялĕ, 3 çурт.
Тел.: 8-927-868-60-72.

Предлагаем керамзитобетонные блоки, пропаренные, цемент, шифр, рубероид, песок речной, гравмассу, керамзит. Доставка бесплатно.
Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-862-27-02, 8-927-851-47-82.

Редакци почтинчен

Яланах кăмăллă

Пурнан пурнăçра такама та тем те кирлĕ пулма пултарать. Пурне те вырăнти магазинсенче тупса илме çук.

Район центрĕнче, Муркашра, магазинĕсем те сахал мар, унсăр пуçне эрне кунсенче "Моргаушавтотехсервис" предприяти территорийĕнче нумаях пулмасть пасар уçни те районти çынсене савăнтарать.

Эпĕ те уйăхне пĕрре-иккĕ унта çитсе килетĕп. Çак кун чăн-чăн уяв тейĕн кунта: халăхĕ хĕвĕшет, тем те сĕнеççĕ предпринимательсем. Техĕмлĕ шашлыкĕ те хăй патне илĕртет.

Ялти çыннăн нихăçан та ĕç пĕтмест. Ирех тăмалла, выльăх-чĕрлĕхне пăхмалла т. ыт. те. Чылай чухне выçăллах тухма тивет. Мана вара пасара хирĕç вырнаçнă кулинари магазинĕнче сутуçăсем яланах ăшă кăмăлпа кĕтсе илни, вĕри кукăль-пӳремечпе, чейпе хăналани савăнтарать. Çынсемпе çепĕççĕн каласса кашнин кăмăлне тивĕçтерме тăрăшаççĕ И.И. Грачева тата З.В. Андреева буфетчицăсем. Хăйсенчен çирĕп ыйтни, яваплăха туйса тăни пулăшать вĕсене кулленхи ĕçре. Ираида Ивановнапа Зинаида Валерановнана Çĕнĕ çул ячĕпе саламласа çирĕп сывлăх, пысăк ӳсĕмсем тума ăнăçусем сунас килет.

Г. МИХАЙЛОВА.

Вăрманкасси ялĕ.

Пурнăçран юлмаççĕ

Эпĕ çамрăк мар ĕнтĕ. Тивĕçлĕ канăва тухнăранпа кĕçех пилĕк çул çитет. Çулсем кайнăçемĕн сывлăхĕ те хавшаса пырать. Çавăнпа та аптекăна ытларах утма тивет. Çутă тĕнчере пĕрре кăна пурăнатпăр та унăн илемĕпе савăнса юлас килет-çке.

Халĕ пурнăçĕ, ĕлĕкхипе танлаштарсан, нумай улшăнчĕ. Рынок тапхăрĕнче суйлама та майсем пур. Тата, тепĕр енчен илсен, пур çĕрте те кирлĕ эмеле тупса илейместĕн.

Манăн вара паян Муркашри Йăла çуртĕнче вырнаçнă аптекăра ĕçлекенсем пирки тав сăмахĕ калас килет. М.Ю. Григорьева тата Е.П. Никифорова хăйсен ĕçне лайăх пĕлеççĕ, çавăнпа та тивĕçĕсене яланах тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ. Аптекăна тĕрлĕ эмелсем илме ватă çынсем те сахал мар килеççĕ. Марина Юрьевнăпа Елена Пименовна кашнинех тимлĕн итлеççĕ, врач мĕн сĕннине шута илсе вĕсене кирлĕ эмелсене, кунта мĕн пуррине сĕнеççĕ. Пенсионерсем те, аптекăна килекен ытти çынсем те вĕсене ăшшăн тав туса тухса каяççĕ.

Турри çирĕп сывлăх патăр вĕсене пархатарлă ĕçре нумай çул хушши вăй хума. Ĕмĕчĕсем çитсе пыччăр, çĕнĕ çулта çĕнĕ ӳсĕмсем пулччăр.

М. АФАНАСЬЕВА,
ĕç ветеранĕ.

ОГРОМНЫЙ ВЫБОР
АУДИО ВИДЕО
БЫТОВОЙ
КОМПЬЮТЕРНОЙ
ТЕХНИКИ

сеть магазинов
Лидер

ЭЛЕКТРОИНСТРУМЕНТЫ, МЕБЕЛЬ,
СПУТНИКОВЫЕ ТАРЕЛКИ,
МОТОБЛОКИ, ТЕЛЕЖКИ

КУПИ БЕЗ ДЕНЕГ
КРЕДИТ 0%

с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 5
Тел.: 2-13-80

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3364. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 22.12.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру А.П. БЕЛОВ.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.